# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

52 (8818) № * Шăматкун, 2020 çулхи утă (июль) уйăхĕн 11-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Республикăра

## Çăмăллăх – 5 ачаллисем валли

**Июлĕн 8-мĕшĕнче, Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕнчи тӳрĕ трансляци вăхăтĕнче, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаев Чăваш Енри нумай ачаллă çемьесене тивĕçтерекен çĕнĕ çăмăллăхсем пирки каланă.**

«Çитес çултанпа пилĕк тата ытларах ачаллă çемьесем çемье усă куракан автомобильшĕн тӳлемелли транспорт налукĕ тĕлĕшпе çăмăллăха тивĕçме пуçлаççĕ. Çакă – пулăшу мерисен пĕр тĕсĕ кăна. Пилĕк тата ытларах ачаллă çемьесене тивĕçтерекен пулăшу мерисен хисепне ӳстересси пирки те ыйтăва пăхса тухмалла. Пирĕн умра кун пек задача тăрать, çавăнпа та ĕç министрĕпе финанс министрне асăннă пулăшу мерине çирĕплетессипе ĕçлеме хушатăп», – палăртнă Олег Николаев.

Вăл республикăра малашне те пулăшу мерисене май килнĕ таран анлăтассипе ĕçлессине пĕлтернĕ.

**Хамăр инф.**

## Çĕр лаптăкĕсене çаврăнăша кĕртеççĕ

**Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе тĕллевлĕ усă курас ыйту республикăра тахçантанпах çивĕч тăрать. Çапла 2021 çул вĕçленнĕ тĕле Чăваш Енре усă курман пур çĕр лаптăкне те çаврăнăша кĕртесшĕн.**

Чăваш Республинин Ял хуçалăх министерствин сайтĕнче пĕлтернĕ тăрăх, 2020 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне усă курман çĕрсен лаптăкĕ республикăра 30,1 пин гектар таран пулнă. Планланипе килĕшӳллĕн кăçал пурĕ 15,1 пин гектар çĕре çаврăнăша кĕртмелле.

Июлĕн 8-мĕшĕнчи даннăйсем тăрăх, регионти хуçалăхсем хальлĕхе усă курман 1,4 пин гектар çĕре çаврăнăша кĕртнĕ. Ку планланин 9,3 процентчĕпе танлашать. Элĕк, Канаш, Вăрмар тата Тăвай районĕсенче ĕçе ыттисенчен лайăхрах йĕркеленĕ.

Муркаш район администрацийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, кăçалхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне район территорийĕнче усă курман çĕрсем 765 гектар пулнă. Кăçал ку таранччен 29 гектар çĕр лаптăкне çаврăнăша кĕртме ĕлкĕрнĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Июлĕн 12-мĕшĕ – Раççей почтин кунĕ

# Тивĕçлĕ ĕçе – тивĕçлĕ хак



*Паян почтальонра чăннипех хастар çынсем ĕçлеççĕ. Вĕсен шутĕнче – эсир паян сăн ӳкерчĕкре куракан Лидия Евдокимова та. Лидия Петровна почтальонра ĕçлеме тытăнни – 32 çул. Унччен магазинта вăй хунă. Периодика изданийĕсене пĕтĕм Хорнуй ялĕнче кăна мар, Муркашри Мир урамĕнче те валеçет. Чăннипех хастар ĕçчен. Апла пулсан маттур ĕçчен Раççей почтин кунĕ умĕн Раççей Федерацийĕн Çыхăну министерствин Хисеп грамотине тивĕçни – тивĕçлĕ ĕçе тивĕçлипе хак пани.*

*В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

Саламсем

**ПОЧТА ÇЫХĂНĂВĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Раççей почтин кунĕ ячĕпе пĕтĕм чунтан саламланине йышăнсамăр!

Чăваш Енри почта отраслĕ 300 яхăн почта çыхăнăвĕн уйрăмне пĕрлештерсе тăрать, вĕсенче 3 пин ĕçчен вăй хурать.

Коронавирус инфекцине сарăлма чарас тĕллевпе йышăннă чарусем вăйра тăнине пăхмасăр, хăйсен ĕçне пĕр кăлтăксăр та тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлакан тата республикăри халăха почта пулăшăвĕпе сервисĕн мĕнпур тĕсĕпе туллин тивĕçтерекен почтальонсемпе операторсене, сортировщиксемпе водительсене чунтан тав тăватăп. Эсир çине тăрса тăрăшнипе республикăра хаçатсемпе журналсен тиражĕсем сыхланса юлаççĕ, çырăнса илекен кăларăмсен шучĕпе Чăваш Ен тăтăшах малти вырăнсене йышăнать.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕсене, пенси илекен çынсене тивĕçекен социаллă тӳлевсене вăхăтра тата шанчăклăн çитерсе панине уйрăммăн палăртса хăварас тетĕп.

Çĕнĕ шухăш-тĕллеве пурнăçлас ĕçре пурсăра та ырлăх, ăнăçу сунатăп. Сирĕн ĕçĕрсем яланах ăнса пыччăр тата малашлăха çирĕппĕн шанса тăрăр!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан О. НИКОЛАЕВ.**

**ПОЧТАЛЬОНСЕНЕ САЛАМЛАТПĂР**

Ыран – Раççей почтин кунĕ. Çавна май Муркаш почтамчĕн почтальонĕсене професси уявĕпе саламлатпăр!

Муркаш почтальонĕсем – чи ĕçченнисем. Эсир тăрăшнипе «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат ытти район хаçачĕсенчен чи пысăк тиражли пулса тăрать. Çакăншăн сире вулакансен ячĕпе те тав тăватпăр.

Сире, хисеплĕ почтальонсем, кашни килте кĕтеççĕ. Шанăçа тӳрре кăларма сире çирĕп сывлăх, лайăх кăмăл сунатпăр!

**Хаçат редакцийĕ.**

Симĕс ĕç çи – 2020

## Апат çителĕклĕ пулĕ

**Район администрацийĕн экономика тата агропромышленность комплексĕн аталанăвĕн пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра пĕрлешӳллĕ кооперативсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем ытларах выльăх апачĕ янтăлассипе тимлеççĕ, хĕле хатĕрленеççĕ.**

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем асăннă пая тăратнă оперативлă кăтартусем тăрăх, июлĕн 10-мĕшĕ тĕлне нумай çул ӳсекен курăксене пĕтĕмпе 4080 гектар çинче çулнă, çакă планпа пăхнин 79 процентчĕ пулать. Çак лаптăк «Ударник» (600 га), «Свобода», Ильич яч. хис. тата Чкалов яч. хис хуçалăхсенче (350-шар га) ытларах. Пĕтĕмĕшле илсен хуçалăхсем планпа пăхнин 85 процентчĕ чухлĕ е 4925 тонна утă типĕтсе хатĕрленĕ.

Хуçалăхсем сенаж çинче те анлăн ĕçлесе пыраççĕ. Çак вăхăт тĕлне вĕсем 10100 тонна е 50 процент сенаж хывса хатĕрленĕ. Ку енĕпе «Свобода» хуçалăхра уйрăмах çивĕч ĕçлесе пыраççĕ, вĕсем 160 процент е 2600 тонна сенаж хывма ĕлкĕрнĕ. Суворов яч. хис. хуçалăхра, «Ударник» хуçалăхра ĕç калăпăшĕ пысăк.

Çавăн пекех хуçалăхсенче кĕрхи культурăсем валли çĕр хатĕрлес ĕçсем пыраççĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Республика аталанăвĕ

# Çитменлĕхсем паллă, мĕн тумаллине палăртнă

**«Чăваш Ен экономикипе социаллă пурнăç аталанăвĕн комплекслă программи» проекта сӳтсе явнă чух кашни ларăвĕнче тенĕ пекех «Международный центр развития регионов» акционер хупă пĕрлешĕвĕн генеральнăй директорĕ Игорь Меламед ытларах программăна туса хатĕрленĕ экспертсене мар, дискуссие хутшăнакансене ырларĕ. Çав вăхăтрах çак тĕп ĕçĕн пĕлтерĕшне чăнах та пысăка хурса хакламалла. Тĕрĕссипе, республикăн истори, çут çанталăк, демографи тата социокультура уйрăмлăхĕсене шута илсе экономикăпа социаллă лару-тăрăва тарăннăн тишкерни Чăваш Ен историйĕнче пĕрремĕш хут пулчĕ. Программа «ыратакан» вырăнсене тупса палăртнипе кăна мар, вĕсене сиплемелли «рецепт» çырса панипе те паха. Çакна июнĕн 24-мĕшĕнче Оперăпа балет театрĕнче иртнĕ Экономикăн аслă канашĕн ларăвĕ те çирĕплетсе пачĕ.**

Тĕп доклад туса панă Игорь Меламед программăн аналитика пайĕн тĕшшине ансат та меллĕ уçса пачĕ: «Республика аталанăвĕ хăçан апла мар кайма тытăннă тата çакă мĕнпе палăрнă? Пирĕн чи малтанах çак ыйтăвăн хуравне тупмалла». Çак сăмахсем Олег Николаев Раççей Патшалăх Думин депутачĕ пулнă чухне пĕлтĕр панă ыйтусемпе пĕр килеççĕ: «Унччченхи плансене пурнăçланин пĕтĕмлетĕвне объективлă тишкерӳ тумасăр Чăваш Ен аталанăвĕн тĕрĕс стратегийĕ çинчен калаçасси те ыйтуллă пулать. Мĕн-ха вăл стратегилле планласси? Ансат чĕлхепе калас пулсан, вăл – висĕ тĕп ыйту çине хурав пани: «Мĕн тунă? Паян эпир ăçта? Ыран эпир мĕн тăвасшăн?»».

Статистика даннăйĕсем тăрăх, 1997 çулта шалти мĕнпур продукци аталанăвĕн векторĕ – экономика лару-тăрăвĕн тĕп кăтартăвĕ – Раççейĕпе вăтамран тата Чăваш Енĕн пĕтĕмпех пĕр пек пулнă. Урăхла каласан, пирĕн республика çĕршывпа «пĕр тан утнă». Хыççăн кая юлма пуçланă. Çапла тепĕр 10 çултан, 1997 çулти шайпа танлаштарсан, Раççейĕпе шалти мĕнпур продукцин вăтам кăтартăвĕ 178 процент пулнă, Чăваш Енпе – 156 процент. Ку республикăшăн вилĕмпе танах пулман-ха. Хыççăнхи вунăçуллăхра чăнчăн хăрушлăх пуçланнă. Çакна пуçаракан 2008 çулти кризис пулса тăчĕ, Чăваш Ен, Раççейри ытти нумай регионпа танлаштарсан, унран юсанса тухма пултараймарĕ. Ĕненме йывăр та, анчах регионăн шалти мĕнпур продукци ӳсĕмĕн кăтартăвĕ 2018 çул пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх... 2007 çулти пекех юлнă. Кунта вăл вăхăтра Чăваш Ен экономика министрĕ пулнă, халĕ айăпланă Владимир Аврелькин каланă сăмахсене аса илмесĕр май çук: «Эпир япăх мар ĕçленĕ-ха, ĕçĕ кӳршĕсем чылай мала кайнинче!».

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

Саламлатпăр

Чи юратнă, чи хаклă мăшăрăма, аннене, кукамая – Мăн Тутаркас ялĕнче пурăнакан **Светлана Эдуардовна КАРПОВĂНА**



сумлă юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Ирхи сывлăм пек таса кун-ҫул, ҫирĕпрен те ҫирĕп сывлăх, хур кайăк ҫулĕ пек вăрăм ĕмĕр, иксĕлми телей, савăнăҫ сунатпăр. Анне, эпир сана питĕ хытă юрататпăр, санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр. Эпир – яланах санпа юнашар. Санăн малалхи пурнăҫу телейлĕ те пуян пултăр. Пурнăҫăн килекен кашни кунĕ ырлăх илсе килтĕр, ҫав ырлăхпа килене пурăнма Турă пулăштăр.

**Саламп\u0430: мăшăрĕ, 4 хĕрĕ, кĕрĕвĕсем, 6 мăнукĕ.**

«Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав»

## «Ҫула вĕҫне ҫити сарма пулать-ши?»

**Чамăш ялĕнче пурăнакан арҫын** редакцие хăйне пăшăрхантаракан ыйтусемпе килчĕ. Вĕсенчен пĕри урамри ҫулпа ҫыхăннă.

Арҫын каланă тăрăх, Чамăш урамĕсенчен пĕринче ҫул ыйтăвĕ ҫивĕч тăрать-мĕн. Вĕсен урамĕнчи ҫула темиҫе ҫул каялла сарнă, анчах вĕҫне ҫити мар.

«Ҫăвĕпе ҫумăр ҫăвас пулсан, кунти ҫĕр типсе те ҫитеймест – ҫулла та ҫӳреймĕн. Май килнĕ таран эпир вак чул ҫартăмăр, анчах кун пек те усси сахалрах. Тăршшĕпех, вĕҫне ҫити, ҫул тума ҫук-ши урамра?» – ыйтать арҫын.

Чамăш ялĕнчи урам ҫулĕ пирки **Оринин ял тăрăхĕн администрацийĕнчен** хурав илтĕмĕр.

Унтан пĕлтернĕ тăрăх, малтанхи ҫулсенче ялăн пĕр урамĕнчи ҫулне пусăрулăх бюджечĕн программипе усă курса тунă. Тепĕр урамĕнчи ҫула вара ҫав вăхăтра ҫулсене юсамалли программăпа усă курса ял тăрăхĕнчи хăш-пĕр ҫула йĕркене кĕртнĕ хыҫҫăн перекетленнĕ укҫа-тенкĕпе сарнă. Ҫапла урам вĕҫне ҫитиччен ҫул сарса тухма укҫа ҫитеймен.

Ҫак ҫула хальхи вăхăтра пусăрулăх бюджечĕн мелĕпе усă курса сарма май пуррине каларĕҫ администрацире.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

Асăрхаттару

## Тăватă ҫын путса вилнĕ

**Муркаш район администрацийĕн ятарлă программăсен пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, паянхи куна районта 4 ҫын шыва путса вилнĕ.**

Иртнĕ кунсенче Муркаш плотининче пĕр ҫын (ӳсĕр пулнă), Автанкасси ялĕ ҫывăхĕнчи пĕвере тепĕр ҫын путса вилнĕ.

Палăртмалла, ҫав вырăнсенче шыва кĕме юраманнине кăтартакан паллăсем пулнă. Ҫапах та вĕсем ҫакна шута илмен.

Унччен маларах Юнкă ял тăрăхĕнче икĕ ҫын путса вилнĕ. Вĕсем иккĕшĕ те ӳсĕр пулнă.

Хальхи вăхăтра район территорийĕнче водолазсем тĕрĕсленĕ хыҫҫăн шыва кĕме юрăхлă тесе пурĕ 7 пĕвепе плотина палăртнă.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Пирĕн календарь

## Курск пĕккинчи ҫĕнтерӳ

**Июлĕн 12-мĕшĕ** – Раҫҫей ҫар историйĕн паллă кунĕ. Ҫак кун 1943 ҫулта Прохоровка патĕнче танксен тĕнче историйĕнчи чи пысăк ҫапăҫăвĕ пулса иртнĕ. Хирĕҫ тăракан икĕ енчен 1200-е яхăн танкпа хăй тĕллĕн ҫӳрекен артиллери установки хутшăннă. Нимĕҫсем 400 танкран 300-шне ҫухатнă. Германи ҫарĕшĕн ҫакă катастрофа пулнă. Курск пĕккинче ҫапăҫусен ăнăҫлăхĕ пирĕн ене куҫнă.

Республика аталанăвĕ

# Ҫитменлĕхсем паллă, мĕн тумаллине палăртнă




(Вĕҫĕ. Пуҫл. 1-мĕш стр.)

Хăйне тата вăл вăхăтри хăйĕн ĕҫтешĕсене комплиментсем калас тенĕ министр мĕн тесшĕн пулнине калама хĕн, анчах та вăл пĕчĕк ҫеҫ аналитика тишкерĕвне тунă пулсан пуҫне ярса тытĕччĕ. Сăлтавĕ те пур. Ҫапла 2008 ҫулхипе танлаштарсан, экономикăри пĕрлештернĕ пур тĕп кăтарту та япăхланнă: ĕҫ тухăҫлăхĕ те, производство фончĕсен эффективлăхĕ те, бюджетри тӳлевсем те, экономикăри кашни ҫын пуҫне явăҫтарнă инвестицисем те, тĕп фонда, регионăн шалти мĕнпур продукцине хывнă инвестицисем те, инноваципле аталаннин кăтартăвĕсем те, пĕр сăмахпа каласан – пур ҫĕрте те пăтăрмах. Ҫакă, паллах, пĕтĕмпех республикăра пурăнакансен пурнăҫĕ ҫинче те палăрнă. Сăмахран, ҫынсен пурнăҫ пахалăхĕн пĕтĕмĕшле кăтартăвĕ тăрăх 2012 ҫулта Чăваш Ен 32-мĕш вырăнта пулнă, тепĕр 7 ҫултан вара 44-мĕш вырăна анса ларнă.

Унчченхи ҫырнисенче те палăртнăччĕ, промышленноҫ тӳпи, тĕрĕсрех каласан, туса кăларакан промышленноҫ тӳпи, Раҫҫейри вăтам кăтартусемпе танлаштарсан, Чăваш Енре регионăн шалти мĕнпур продукци структуринче палăрмалла пысăк – 29 процент, ҫĕршыври вăтам кăтарту – 9 процент. «Ылтăн ҫăмарта тăвакан чăхха» ачашламалла кăна пек, анчах та ку енĕпе те пăтăрмах сиксе тухнă. Отрасль кăтартăвĕсене пăхсан, отрасль япăх аталанса пыма тытăнни тӳрех куҫа курăнать. Тĕп даннăйсем вырăнне 1990 ҫулти кăтартусене илсен ҫакă палăрать: 2008 ҫулти кризис хыҫҫăн промышленноҫ продукцине туса кăларассин калăпăшĕ Раҫҫейре вăтамран 29 процент чухлĕ чакнă, Чăваш Енре – 41 процент чухлĕ. Хыҫҫăн экономикăна ура ҫине тăратас ĕҫ пуҫланнă. Ҫапла 2019 ҫул тĕлне ҫĕршывра пĕтĕмĕшле 1990 ҫулти шаях тухнă пулсан, Чăваш Енре ку кăтарту 68 процентпа кăна танлашнă. Ытти регионa промышленноҫа ҫавăн пек хăвăртлăхпа тавăрма мĕн пулăшнă-ха? Пĕремĕшĕнчен, шалти резервсене пурне те усă курни, производствăна аталантарассин йĕркине лайăхлатни, ҫĕнĕ технологисемпе ĕҫлеме тытăнни тата инвестицисене активлă явăҫтарни. Чăваш Енре вара, шел пулин те, ҫакăнпа нимĕнпе те мухтанма пултарайман. Пĕр сăмахпа каласан, иртнĕ 10 ҫул аталану майĕсене алăран вĕҫертнĕ ҫулсем пулса тăнă.

Ҫакна май ыйту тухса тăрать: «Промышленноҫри лару-тăрăва лайăхлатас тесен мĕн тумалла? Ăна вăйлăн аталантарма шанăҫ пур-и?»

Ҫак ыйту ҫине Программа ҫирĕплетӳллĕ хурав парать. Ҫапла мероприятисен планне е, тепĕр майлă каласан, промышленноҫ комплексне аталантарассинчи тĕп ыйтусене татса памалли ҫул-йĕр карттине туса хатĕрленĕ. Унта йĕркелӳ, нормăпа право, институтсен тата пĕтĕмĕшле тытăмăн пурĕ 59 мероприятине уҫҫăн ҫырса панă. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри пĕтĕмĕшле экономика характерлă тата вĕсем ытти планпа, мероприятисемпе ҫывăх, анчах та вĕсен пĕрпеклĕхне тупса палăртнă тата ҫыхăнăвне йĕркеленĕ, ҫапла майпа вĕсем пĕр тытăм пулса тăраҫҫĕ. Паллă ĕнтĕ, вĕсене пурнăҫласси федераци министерствисемпе тата ведомствисемпе тачă ҫыхăнса ĕҫлеме ыйтать. Программăра ку саманта та палăртнă. Унта Олег Николаев хутшăннипе кăна пурнăҫланма пултаракан программăсемпе программа хушăмĕсене уйрăммăн кăтартнă. Ҫакăн пек хутшăну пулни вĕсене пурнăҫланине контрольлеме кăна мар, «килте туса кăларнине» федераци программисемпе нацпроектсене кĕртсе вырнаҫтарма май памалла, ҫавăн пекех, тĕлĕнмеллерех илтĕнет пулин те, республика интересĕсене палăртса тĕп влаҫ органĕсемпе каласса татăлма пĕлни кирлĕ, кăна вара Олег Николаев пултарать.

Конкретлă мĕн сĕнеҫҫĕ-ха Программăна туса хатĕрлекенсем промышленноҫ сферинче? Сăмах май, вĕсен «рецепчĕ» универсаллă, ҫавăнпа та вăл Чăваш Еншĕн кăна мар, ытти регионшăн те юрăхлă.

Пĕремĕшĕнчен, Раҫҫей производителĕсен продукцине сертификациелессипе ҫыхăннă тăкаксене пĕчĕклетесси. Практика кăтартса панă тăрăх, правительство юлашки ҫулсенче тĕрлĕ мера йышăннă пулин те, тавара рынока кăларма продукцие сертификациелессипе ҫыхăннă пăтăрмахсем ура хураҫҫĕ: ăна туса хатĕрлессин срокĕ вăрăм, бюрократи пăтăрмахĕсем, ҫавăн пекех пĕчĕк мар тăкаксем.

Иккĕмĕшĕнчен, унченхи СССР республикисем пулнă патшалăхсен хушшинчи кооперацие ҫыхăнăвĕ анăланса пынăран, Еврази экономика союзĕн таможня чикки урлă илсе каҫаракан продукцие контрольлессипе пĕрлехи система кирлĕ. Хăй вăхăтĕнче программăна сӳтсе явма хутшăнакансенчен пĕри – «Сеспель» акционер хупă пĕрлешĕвĕн генеральнăй директорĕ Владимир Бакшаев шăпах ҫакăн пирки каланăччĕ. Икĕ ҫул каяллах предприятие Олег Николаев килсе курнă чухне вăл ҫăхавласа ҫакна пĕлтернĕччĕ: таможня хутшăнăвĕсене йĕркелекен саккунсенчи ҫитменлĕхсемпе усă курса ют ҫĕршывсенче усă курнă транспорт техники Белоруссии чикки урлă Раҫҫее лизинг майĕпе каҫса питĕ нумай килет, ăна Раҫҫейре сертификацилемен, вăл вара ҫынсен пурнăҫĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратать.

Ҫак ыйтупа тепри те ҫыхăннă. Ăна та Программăна хатĕрлекенсем татса пама сĕнеҫҫĕ. Сăмах Раҫҫейри предприятисенче туса кăларакан продукци евĕр оборудованисене ют ҫĕршывран турттарса кĕнĕшĕн пошлинăна отрасльти номенклатурăпа палăртнă тăрăх ҫирĕплетмелли пирки пырать. Апла Раҫҫейре туса кăларман ют ҫĕршыв продукцийĕ тĕлĕшпе мĕнле пулмалла-ха? Вĕсемшĕн вара, импорт оборудованийĕ вырăнне хамăрăннине кăларассинче усă куракан уйрăм комплект хатĕрĕсемшĕн ҫеҫ, таможня пошлинине пĕчĕклетме сĕнеҫҫĕ.

Пĕтĕмĕшле илсен, Программăра палăртнă проектсене пурнăҫласси 14 муниципалитетри 73 предприятие пырса тивет. Паллах, кун пек плансене пурнăҫа кĕртме пысăк укҫа-тенкĕ кирлĕ. Ҫапах та ҫак ҫăмăл мар ыйтăва та программăна хатĕрлекенсем тарăн тĕпченĕ тата финанслассин механизмне конкретлă ҫырса панă.

**Алексей КРЯЖИНОВ.**

Ыран – Раҫҫей почтин кунĕ

# «Ĕҫ вăй-хал парса тăрать»




Паянхи **сăн ӳкерчĕкре** – Мăн Сĕнтĕрти почта уйрăмĕн туслă йышĕ – почтальонсем (малалла – сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла). Юрий Петров – тивĕҫлĕ канăва тухнă ҫын, анчах та вăл коллективри чи ҫамрăк почтальон шутланать. Елена Щеглова почтальон та сумлă ăру ҫынни, апла пулин те вăл кашни кунах 4 яла ҫитет. Вĕсен ĕҫтешĕ Елена Ильина вара почтальонра вăй хума тытăнни 10 ҫул урлă та каҫнă. Ҫавăнпа вăл Мăн Сĕнтĕрте пурăнакансен кăмăлĕсене те пĕлсе ҫитнĕ ĕнтĕ. Валерий Варюхин почтальон сумкине алла тытнăранпа, ялтан яла утма тытăннăранпа та вăхăт сахал мар иртнĕ.

Ҫак туслă коллектив вырăнти 13 ялта пурăнакан ҫынсене хаҫат-журналпа, тĕрлĕ таварпа тĕрĕс-тĕкел тивĕҫтерсе тăрать. «Ĕҫ пурри чуна усать, пурăнма вăй-хал парса тăрать», – теҫҫĕ почтальонсем.

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

Пуҫарулăх бюджечĕ

# «Выртакан чул айĕпе шыв юхмасть»

**Асăннă ваттисен сăмахĕ аваллăхпа ҫыхăннă пулин те, паянхи куншăн та вăл питех те пĕлтерĕшлĕ те актуаллă пулса тăрать. Сăмах – Чăваш Республикин Пуҫлăхĕн 2017 ҫулхи «О реализации на территории Чувашской Республики проектов развития общественной инфраструктуры, основанных на местных инициативах» Указĕ пирки. Тĕвата ҫул ĕнтĕ пуҫарулăх бюджечĕн программи пирĕн районта та анлăн пурнăҫа кĕрсе пырать. Ҫак вăхăтра ку мелпе туса ирттерме май килнĕ ĕҫсем, ăна пурнăҫа кĕртессипе юлашки ҫулсенче пулса иртнĕ улшăнусем пирки район администрацийĕн экономика тата АПК аталанăвĕн пайĕн пуҫлăхне Ольга ТИМОФЕЕВĂНА каласа пама ыйтрăм:**



– Пĕрремĕш ҫултан тытăнсах пирĕн район пуҫарулăх бюджечĕн проекчĕсене пурнăҫа кĕртме активлă хутшăнать. 2017 – 2019 ҫулсенче кăна ҫапла майпа 38 проект пĕтĕмĕшле 34 млн ытла тенкĕлĕх пурнăҫа кĕртме май килчĕ. Вăл шутран республика уйăрнă укҫа-тенкĕ 20 млн та 650 пин тенкĕ пулчĕ, вырăнти бюджетран 6 млн та 880,8 пин тенкĕ уйăрнă, ял ҫыннисем, вырăнти организацисемпе уйрăм предпринимательсем 6 млн та 889,1 пин тенкĕ пухса панă. Хăтлăх ĕҫсем 14 пин ҫынна пырса тивеҫҫĕ.

Проектсене пурнăҫа кĕртессипе уйрăм предприяти-организацисен пулăшăвĕ те курăмлă. Ҫавăнпа та манăн паян «Герой», Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуҫалăх предприятийĕсене, акционерсен «ТУС» обществине, «ЧЕТА», «Электроприбор», «РЭГО» обществăсене пысăк тав сăмахĕ калас килет. Пуҫарулăх бюджечĕн мелĕпе объектсем хута ярассинчен вĕсем айккинче тăмарĕҫ.

Кунпа пĕрлех Уйкас Янасал, Мăн Сĕнтĕр, Ҫатракасси, Хорнуй, Чуманкасси, Юнкă ял тăрăхĕсене те палăртса хăварас пулать. 2017 – 2019 ҫулсенче вĕсенче кашнинчех 3-шер проект пурнăҫа кĕртме пултарчĕҫ.

Урамсенчи ҫулсене вак чул сарса хытарассипе 27 проект пурнăҫа кĕртме май килчĕ. 18,5 километр тăршшĕ ҫулсене юсама 29 ытла млн тенкĕ расхутланă. 7 проектпа ача-пăча площадкисем йĕркеленĕ, шыв башнине юсассипе тата контейнер площадки йĕркелессипе пĕршер проект, клуб ҫуртне юсассипе 2 проект пурнăҫа кĕчĕ.

2018 ҫулта пурнăҫа кĕртнĕ проектсенчен район комиссийĕ обществăлла инфраструктурăна аталантарассипе Йӳҫкасси ял тăрăхĕн проекчĕ чи лайăххи тесе палăртнăччĕ. Ку вăл – Анатри Панклири ача-пăча спорт тата вăййă площадки. Асăннă проект республика конкурсне те хутшăнма тивĕҫрĕ.

Пĕлтĕр районĕпе 18 проект пурнăҫа кĕртме май килчĕ, пĕтĕмĕшле 18 ытла млн тенкĕлĕх. Вăл шутран 15 проект – ҫулсене юсассипе тата ача-пăча спорт площадки йĕркелессипе, шыв башнине юсассипе, контейнер плащадки тăвассипе пĕршер проект. Ĕҫсене контрактпа пăхнă пек пурнăҫламан пирки пĕр проект пурнăҫланмасăр юлчĕ. Ку вăл – Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи урам ҫулне вак чул сарса хытарасси. Чи лайăх проект тесе вара иртнĕ ҫул Муркашри Луговая урам ҫулне юсанине палăртнă.

Кăҫал республика комиссине 33 проект тăратрăмăр. Ĕҫсен пĕтĕмĕшле хакĕ 43 млн ытла тенкĕлĕх. Ку шутран 21 проект ҫулсене юсассипе, 2 проект масар территорийĕсене хăт кĕртессипе, 5 проект ача-пăча площадки тăвассипе, 5 проект шыв башнисемпе пăрăхсене юсассипе. Ҫатракассипе Хорнуй ял тăрăхĕсем 4-шар проект, Муркаш тата Йӳҫкасси ял тăрăхĕсем 3-шер проект хатĕрлерĕҫ. Паянхи куна илес пулсан, объектсенче ĕҫсем пуҫланнă, ҫак вăхăта хута каяканнисем те ҫук мар ĕнтĕ. Акă Хорнуй ял тăрăхĕнчи Хорнуй ялĕнчи Новая урам ҫулне «Гудвилл» ООО юсаса пĕтерчĕ, ҫавăн пекех Ҫатракасси ял тăрăхĕнчи Кашмаш ялĕнче «Современные комплексные решения» ООО ача-пăча вăййă тата спорт площадки хута ячĕ.

Ҫавна та каласа хăварас пулать. Республика конкурс тĕрĕслевне 2020 ҫулах пурнăҫлама май пур татах 3 проект хатĕрлесе панă. Пĕри шывпа тивĕҫтермелли системăна юсассипе тата иккĕшĕ ҫулсене юсассипе ҫыхăннисем.

Ҫĕнĕлĕхсенчен ҫаксене асăнса хăварас пулать. Иртнĕ ҫулсене илес пулсан, пĕр ял тăрăхĕнчен тăратакан проектсен пĕтĕмĕшле хакĕ 5 млн тенкĕ таран пулма пултарнă. Кăҫалтан тытăнса ял тăрăхĕсем вырăнти инфраструктурăна аталантарассипе пуҫарулăх бюджечĕн проекчĕсене ҫуллен 10 млн тенкĕлĕх пурнăҫа кĕртме пултараҫҫĕ. Пĕр проект валли республика уйăрма пултаракан сумăма та 5 млн тенкĕне ҫитернĕ.

Унччен проекта пурнăҫа кĕртме кирлĕ суммăн 20 процентне ял ҫыннисен, вырăнти предпринимательсен хайсен пухмалла пулнă. Тепĕр 20 процентне ял тăрăхĕн бюджетĕнчен, 60 процент таран республика уйăрнă. Халĕ вара ял ҫыннисен тӳпине 10 процента кăна хăварнă. Ҫакă та пĕлтерĕшлĕ самант пулса тăрать.

Ҫĕнĕ положенипе килĕшӳллĕн пуҫарулăх бюджечĕн мелĕпе хута янă капиталлă строительство объекчĕсене пĕр уйăх хушшинчен кая юлмасăр ял тăрăхĕн муниципалитет харпăрлăхне ҫирĕплетме тивĕҫ. Апла пулсан вĕсем хуҫасăр объектсем пулмаҫҫĕ.

Район администрацийĕн 2020 ҫулхи январĕн 29-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн, кăҫалхи май – июнь уйăхĕсенче район территорийĕнче 2017 ҫултан тытăнса пуҫарулăх бюджечĕ мелĕпе ĕҫе кĕртнĕ проектсене тĕрĕслессине йĕркелерĕмĕр. Тĕрĕслев акчĕсене республика Ял хуҫалăх министерствине тăратрăмăр.

**В. ШАПОШНИКОВ калаҫнă.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Кашмаш ачисем ҫĕнĕ вăййă площадкишĕн хавас.**

Ҫемье

# Уявра чысларĕҫ



**Июлĕн 8-мĕшĕнче, Ҫемье, юрату тата шанчăклăх кунĕнче, Чăваш Республикин Пуҫлăхĕн тивĕҫĕсене вăхăтлăх пурнăҫлакан Олег Николаев ҫирĕп те пултаруллă ҫемьесене тӳрĕ эфирта уявпа саламларĕ. «Енчен те кашни килте ăшă та хăтлă, енчен те унта юратупа телей, ача-пăчан усă кулли пурăнать пулсан, пирĕн ҫĕршыв аталанать тата малашне те аталанĕ», – терĕ вăл онлайн-тĕл пулăва хутшăнакансене. Вăл палăртнă тăрăх, нумай ачаллă ҫемье пирĕн обществăн пурнăҫ йĕрки пулмалла, ҫавăн пекех патшалăх пулăшăвĕн ҫĕнĕ мерисем ҫинче чарăнчĕ.**

Йăлана кĕнĕ тăрăх, тĕслĕхри ҫемьесене асăннă уявра патшалăхăн пысăк наградисемпе чысласҫĕ. Раҫҫей Федерацийĕн Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн Турай ял тăрăхĕнчи Лениана Александровнăпа Николай Егорович Егоровсене **(сăн ӳкерчĕкре)** ҫемье институтне ҫирĕплетессинчи тата ача-пăчана воспитани парассинчи тава тивĕҫлĕ ĕҫсемшĕн «Ашшĕ-амăш мухтавĕ» орден медальне тивĕҫнĕ ятпа саламларĕ.

Ҫак мăшăр чăннипех те пур енлĕ пултаруллă та хастар. Вĕсем ĕҫ ҫулĕсене ачасене воспитани парассине халалланă. Николай Егорович пуҫламăш классен учителĕнче 43 ҫул ĕҫленĕ, вăл шутра 36 ҫулне – Тушкассинчи пуҫламăш шкул ертӳҫинче. Шкулăн ҫĕнĕ ҫуртне вăл тимленипе тата тӳпе хывнипе тума май килнĕ. Лениана Александровнăн та педагогикăри ĕҫ стажĕ 42 ҫул, вăл шутра 13 ҫулне вăл Анаткассинчи пуҫламăш шкула ертсе пынă. Вĕсен пултарулăхĕпе тăрăшулăхне чылай наградăпа ят-сум ҫирĕплетет.

Тĕп ĕҫсĕр пуҫне Егоровсем обществăлла ĕҫсенче те яланах хастар та пуҫаруллă. Сывă пурнăҫ йĕркине ҫирĕп тытса пыраҫҫĕ, ыттисене те ҫак йĕркене пăхăнма сĕнеҫҫĕ.

Тивĕҫлĕ канура та вĕсем вăхăта ҫынсемшĕн усăллă иртерме тăрăшаҫҫĕ. Николай Егорович – «ЗОЖ» хаҫатра пичетленекен чылай статья авторĕ, тĕрлĕ чир-чĕре ҫăмăллатма, сиплеме тăтăшах сĕнӳсем ҫырса тăрать. Сипленнисем канашсемшĕн тав туса ҫыраҫҫĕ. Ҫавăн пекех район хаҫатне те вăл усăллă канашсене тăтăшах ҫырса тăрать.

Егоровсем 61 ҫул пĕрле пурăнаҫҫĕ. 6 хĕр ӳстерсе пурнăҫ ҫулĕ ҫине тăратнă, 14 мăнук, 18 кĕҫĕн мăнук. Ырă тĕслĕхри ҫынсем 90 ҫулта. Хисеплĕ ҫынсем ачисемшĕн тата ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăраҫҫĕ.

Ҫав кунах районта та уяв кăмăллăн иртрĕ. Ăна район пуҫлăхĕ – депутатсен район Пухăвĕн председателĕ Игорь Николаев уҫрĕ, пухăннисене уявпа саламларĕ, ҫемье пĕлтерĕшĕ ҫинче чарăнчĕ. Тухса калаҫакансем татах та пулчĕҫ.

Кăҫалхи уявра «Юратупа шанчăклăхшăн» медале Ефросиния Сергеевнăпа Николай Филиппович Куликовсем, Валерия Ивановнăпа Виктор Александрович Терехинсем, Римма Петровнăпа Александр Сергеевич Волковсем тивĕҫрĕҫ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

Редакци почтинчен

# Паллă ҫыравҫăсен тăванĕ

**Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Тури Тăмлай ялĕнче пурăнакан Галина Никитична Шишкина патне иртнĕ ҫулхи ҫĕртме уйăхĕнче шкул ачисен ушкăнĕпе кайса килнĕччĕ. Ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕ ун чухне пире ĕҫ ветеранĕ – Акуча тăрăхĕнчи хисеплĕ ҫын.**

Галина Никитична1934 ҫулта Иштерек ялĕнче ҫут тĕнчене килнĕ. Сыпайри ҫичĕ ҫул вĕренмелли шкул хыҫҫăн хăйĕн тĕллевне пурнăҫлама Ҫĕрпӳри библиотека техникумне вĕренме кĕнĕ. Унтан ăнăҫлă вĕренсе тухнă хĕр Сыпайри клуб ертӳҫинче, кайран ял библиотекинче тăрăшнă. Ҫемьеленсен упăшкин, Евгений Александровăн, тăван ялне пурăнма куҫнă.

Калас пулать, ҫав ҫулсенче культура вучахне хĕмлентерекенсем библиотекăра ĕҫлекенсем пулнă. Ял ҫыннисен хушшинче туса ирттерекен ĕҫе тĕрлĕ енлĕ аталантарнă. Ҫак шута колхозниксене ҫĕршыври лару-тăру пирки ҫĕнĕ хыпарсемпе паллаштарни те, ĕҫри вăхăтĕнче агитбригадăпа тухса халăха савăнтарни те, шкул ачисене тĕрлĕ мероприятие явăҫтарни тата ытти те кĕнĕ. Хăйĕн ĕҫне юратса пурнăҫланăранах ĕнтĕ вăл вырăнти ҫынсен хисепне тивĕҫнĕ.

«Юратса тусан, чи пĕчĕкҫĕ ĕҫе те чаплăлантарса яма, усă паракан тума пулать», – аслă вĕрентекенĕмĕрĕн сăмахне яланах асра тытнă Галина Никитична. Чун килĕштернĕ ĕҫре хĕрĕх ҫула яхăн тимленĕ хастар культура ĕҫченĕ. 1970 ҫулта вăл пархатарлă ĕҫшĕн медаль илме те тивĕҫнĕ.

Халăхпа пĕр чĕлхе тупма пултарни, пĕлĕве кунран-кун анлăлатни, шанăҫа тӳрре кăларни, ĕҫченлĕхĕ – ҫак енсем паян та пур унра. Эпир пынă кунхине те утă типĕтмеваскатчĕ лара-тăра пĕлмен хĕрарăм (ватă теме чĕлхе ҫаврăнмасть – алла туя тытман).

Унăн килĕ тăван тавралăхăн илемлĕ кĕтесĕнче вырнаҫнă: юнашарах тĕрлĕ кайăк юрриллĕ пĕчĕк ката, ҫап-ҫутă тĕкĕрлĕ пĕве. Ытарайми кĕтес! Ахальтен мар ĕнтĕ ҫак вырăна килĕштернĕ чăвашсен паллă ҫыравҫисем: арăмĕпе упăшки – Александра Лазаревăпа Леонид Агаков. Александра Назаровна ҫак кил-ҫуртра ҫуралса ӳснĕ. Вăл Галина Никитичнăн упăшкин тăванĕ. Ҫуллахи кану кунĕсене тăван ялта ирттерме юратнă ҫыравҫăсем. Хуҫалăх ĕҫĕсене хутшăннисĕр пуҫне хайлавсем те шăрҫаланă паллах.

Пахчари пĕчĕк ҫурта кăтартрĕ кил хуҫи шкул ачисене. Ҫакăнта ҫырса ларма кăмăлланă иккен тăванĕсем. Тен вĕсен паллă хайлавĕсем шăпах ҫакăнта ҫуралнă? Юратнă ҫыравҫăсем пирки чылай кăсăклине пĕлчĕҫ ачасем ун чух. Сăн ӳкерчĕксен альбомне тишкернĕ май Галина Никитична хаклă тăванĕсемпе ҫыхăннă самантсене куҫ умне кăларчĕ. Хурланса йĕрсе те илчĕ. Апла пулин те тараватт кил хуҫи ачасен ыйтăвĕсене те туллин хуравларĕ.

Тĕл пулу ачасен асĕнче нумайлăха юласси те иккĕлентермерĕ.

Аслă ӳсĕмри ҫынсен хастарлăхĕ паянхи шкул ачисемшĕн – курăмлă тĕслĕх. «Ҫĕр ҫинче нимрен малтан этем пулас пулать», – Александра Лазаревăн сăмахĕсене ҫамрăк ăру ăса хывĕ пулĕ тесе шутлатăп.

**Г. ЕМЕЛЬЯНОВА,**
**Ярапайкассинчи вăтам шкул вĕрентекенĕ.**

# «Солнечный» – кунта пурăнас килет!!! Хваттер хакĕсем – 1 387 000 тенкĕрен тытăнса!!! Августрах пурăнма тытăн!

Анна ИМЕННОВА



**Шупашкара пурăнма килес тетĕр пулсан – «Солнечныйне» кăна!!**

Мĕншĕн тесен:

• хваттер хакĕсем – пĕр тăваткал метршăн 32 пин тенкĕрен тытăнса;

• ГК «Удача» – Чăваш Енри калăпăшлă строительство ĕçĕсен лидерĕ;

• хваттерсем вăрманпа парк еннелле вырнаçнă;

• август уйăхĕнче хута каякан хваттерсене туянма май пур;

• «Лучик» ача садĕнче бассейн пур;

• ясли ушкăнĕсемлĕ ача садне 2020 çулта тума тытăнаççĕ;

• çĕнĕ автомобиль çулĕ, 35-мĕш маршрут автобусĕ çÿрет;

• общественнăй транспортпа 3 чарăнăвĕ пур;

• çуртсенче – «Умный дом» система, счетчиксен кăтартăвĕсем ертсе пыракан компание автоматла майпа каяççĕ;

• çуртсен таврашĕнчи тата картиш территорийĕсенче видеосăнав системи, видеодомофонсем вырнаçтарнă;

• çуртсене хутса ăшăтасси автономлă. ЖКХ тÿлевĕсем пысăк мар;

• капăрлăх (отделка) тĕсĕсем: малтанласа туни, пĕтĕмпех туса çитерни, дизайн юсавĕпе туни – ипотека шутне кĕрессĕ;

• 13 çурт хута янă ĕнтĕ, 4 пин ытла çын пурăнать.

Çакă пĕтĕмпех – «Солнечный» микрорайон! Пуриншĕн те меллĕ!

Халĕ Шупашкар хулинчи Солнечный микрорайонта хваттер харпăр хăй валли юсав ĕçĕсем туса иртнерине туянма тата унăн хакне ипотекăна кĕртме май пур! Çурт-йĕре тăвакан – «Удача» компанисен ушкăнĕ юсав ĕçĕсем туса иртересине пĕтĕмпех хăйĕн çине илет. Хваттер суйласа илĕр те сирĕн кăмăлăра кура дизайнне тÿлевсĕрех хатĕрлесе парĕç.

**Строительство ĕçĕсем** пысăк хăвăртлăхпа пыраççĕ.

Çĕнĕ çурт август уйăхĕнчех хута каймалла! Кунта илемлĕ, вăрман еннелле тухакан хăтлă хваттерсем. Юнашарах икĕ ача сачĕ! «Лучик» 250 ачана йышăнать. Çитес çул татах тепĕр ача сачĕ хута яма палăртаççĕ. Строительство ĕçĕсене туса иртерекен подряд организацине палăртнă ĕнтĕ.

**Хваттер туянмалли майсем:**

*– туллин тÿлесе;*

*– меллĕ майпа ипотекăпа усă курса;*

*– рассрочка мелĕпе.*

***Усăллă!***

***Халĕ дизайн юсавĕн хакне ипотекăна кĕртме май пур: 1 пÿлĕмлĕ хваттершĕн – 270 пин тенкĕ, 2 пÿлĕмлĕ хваттершĕн – 330 пин тенкĕ.***

***Хальхи условисем*** питех те меллĕ. Юсав ĕçĕсене туса иртнерĕ хваттере 6,1 процент ставкипе туянма пулать, уйăхсерехи тÿлев пĕтĕмпе те 9365 тенкĕпе танлашать!

Меллĕхĕ татах пур. 2020 çулхи июнĕн 15-мĕшĕнчен тытăнса «Патшалăх пулăшăвĕ – 2020» программа шайĕнче Перекет банкĕ ипотекăн пуçламăш взносне чакарчĕ. Халĕ сирĕн хăвăрăн хваттере туянма ун хакĕн 15 процентне кăна тÿлемелле пулать.

**Солнечный – çамрăк** тата малашлăхлă район. 2 – 3 çул каялла кунта пурăнма тытăннисем вăл палăрмалла мар улшăннине палăртаççĕ. Халĕ кунта апат-çимĕç продукчĕсен магазинĕсем тăватта, парикмахерскисем, строительство тата хуçалăх таварĕсен магазинĕ. Çĕнĕ суту-илÿ центрĕ çĕкленет. Çывăх вăхăтрах 110 вырăнлă ача сачĕ тума пуçăнаççĕ. Малашлăхра вара – 1100 вырăнлă çĕнĕ шкул.

**Солнечныйра** вăйă площадкисем 13 тата спорт площадкисем 2. Çуртсем патĕнче ирĕклĕ экопарковкăсем туса панă. Хулан ытти районĕпе микрорайона çĕнĕ çул çыхăнтарать. Ку çулпа 35-мĕш маршрут автобусĕ йĕркеллĕ çÿрет. Кунта хула хăтлăхĕпе хула тулашĕнчи ирĕклĕхе туллин туйса илетĕн.

**Хатĕр юсав ĕçĕсен шутне çаксем кĕреççĕ:**

*– обой çыпăçтарни;*

*– электропроводка карни;*

*– урай сарни, плинтус вырнаçтарни;*

*– хваттерĕн кĕмелли тимĕр алăкне тата пÿлĕм алăкĕсене лартни;*

*– карăнтарнă (натяжной) мачча туни;*

*– санузелта кафель плитка сарни;*

*– ванна, умывальник, смеситель лартни;*

*– кухньăра плиткăран фартук çыпăçтарни;*

*– балкона юсани (маччи – панель, стенисем – штукатурка, урай);*

*– линолеум сарни.*

**6,1 процент ставкипе хваттершĕн уйăхсерен çакăн чухлĕ тÿлемелле пулать**

| Хваттер тĕсĕ | Хакĕ | Малтанхи взнос | Юсав ĕçĕсене туманнишĕн | Юсав ĕçĕсене тунишĕн |
|---|---|---|---|---|
| 1 пÿлĕмли - 35,57 тăваткал метртан тытăнса | 1 387 230 тенкĕрен тытăнса | 616 617 тенкĕ - ача амăшĕн капиталĕ | 5 566 тенкĕрен тытăнса | 7 516 тенкĕрен тытăнса |
| | | 209 000 тенкĕ - хваттер хакĕн 15 процентĕ | 8 510 тенкĕрен тытăнса | 10 171 тенкĕрен тытăнса |
| 2 пÿлĕмли (евро) - 42,01 тăваткал метртан тытăнса | 1 638 390 тенкĕрен тытăнса | 616 617 тенкĕ - ача амăшĕн капиталĕ | 7 380 тенкĕрен тытăнса | 9 330 тенкĕрен тытăнса |
| | | 246 000 пин тенкĕ - хваттер хакĕн 15 процентĕ | 10 057 тенкĕрен тытăнса | 11 710 тенкĕрен тытăнса |
| 2 пÿлĕмли - 53,28 тăваткал метртан тытăнса | 2 077 920 тенкĕ | 616 617 тенкĕ - ача амăшĕн капиталĕ | 10 554 тенкĕрен тытăнса | 13 082 тенкĕрен тытăнса |
| | | 312 000 тенкĕ - хваттер хакĕн 15 процентĕ | 12 754 тенкĕрен тытăнса | 14 889 тенкĕрен тытăнса |

С 12.05.2020 по 30.07.2020 г. в рамках программы кредитования Сбербанка «Госпрограмма 2020» по ставке от 6,1% годовых на срок кредита от 12 до 240 месяцев у ООО СЗ «Венера», при условии проведении сделки с услугой «Электронная регистрация права собственности», а также оформления страхования жизни и здоровья заемщика в аккредитованных ПАО Сбербанк компаниях. При отказе заемщика от страхования жизни и здоровья процентная ставка увеличивается до 7,1% годовых.
Первоначальный взнос от 20% В случае не предоставления документов, подтверждающих финансовое состояние и занятость, первоначальный взнос от 50%. Валюта – рубли РФ. При отказе заемщика от услуги «Электронная регистрация права собственности» процентная ставка увеличивается до 6,4% годовых.
Доп расходы: страхование жизни и здоровья заемщика, страхование и оценка объекта недвижимости, оформляемого в залог (тарифы зависят от индивидуальных особенностей заемщика), нотариальное заверение документов, направление документов на гос. регистрацию ДДУ в электронном виде.
. Подробнее об условиях кредитования, необходимых документах и ограничениях на www.sberbank.ru. Реклама. ПАО Сбербанк. Генеральная лицензия Банка России на осуществление банковских операций №1481 от 11.08.2015.

**Ахальтен каламаççĕ,** Солнечный вăл – пурăнас килмелле вырăн. Çак сăмахсен чăнлăхне тĕрĕслесе пăхас тетĕр пулсан, экскурсие çырăнăр: 8 (8352) 41-00-00.

**Çуртсенче** хваттерсене харпăр хăй хутса ăшăтмалла тунă, ăшă счетчикĕсене харпăр хăйне вырнаçтарса панă. Çавна май ЖКХ услугисен тÿлевĕсем те пысăк мар: çулла – 800 тенкĕрен, хĕлле – 1400 тенкĕрен тытăнса. Кашни хваттертех «Умный дом» система пур – счетчиксен кăтартăвĕсем ертсе пыракан компание автоматла майпа кайса тăраççĕ, видеодомофонсем вырнаçтарнă.

Юсав ĕçĕсене туса иртнерĕ хваттерсене пăхма кăмăл пур-и? Харпăр хăй валли экскурсие çырăнма пултаратăр. Телефонĕ: 8 (8352) 41-00-00.

**Суту-илÿ офисĕсем:**

• «Солнечный» бульвар,12-мĕш çурт, 1-мĕш корпус (тунтикунран тытăнса эрнекунччен – 9 сехетрен пуçласа 18 сехетчен, шăматкунпа вырсарникун – 9 сехетрен пуçласа 15 сехетчен).

• Мускав проспекчĕ, 25-мĕш çурт, 1-мĕш корпус (тунтикунран тытăнса эрнекунччен – 9 сехетрен пуçласа 17 сехетчен).

• 8 (8352) 41-00-00 (8 сехетрен тытăнса 21 сехетчен, кану кунĕсемсĕр).

Сайт: www.21sol.ru.

Социаллă сетьсем: vk.com/21sol.

«Инстаграмм»: @solnechnyi_cheb.




**Асăрхаттару**

# Шывра яланах асăрханулла пулăр!

**Ăшă кунсем пуçлансанах нумайăшĕ пĕвесемпе юхан шывсене шыва кĕме кайма пуçлать. Анчах та асăрханулăх правилисене манса кайнă е пăхăнман пирки час-часах çынсем инкеке çакланаççĕ, хăш-пĕрин вара пурнăçĕ те татăлать.**

**Мĕн тумалла çу кунĕсем инкек-синкексĕр, савăнăçлă кăна иртчĕр тесен, çакăн çинчен тата ытти ыйту çине хурав пама Республикăри медицина профилактикин, сиплев физкультурипе спорт медицинин центрĕн врачне Елена Михайловна ЕГОРОВĂНА ыйтрăмăр.**

**– Елена Михайловна, çулсеренех пĕвесемпе юхан шывсенче çынсем путса вилеççĕ. Кăçал пирĕн республикăра мĕнле лару-тăру?**

– Шел пулин те, пирĕн республикăра та пĕр çул та шыв çинче инкексĕр иртмест. Уйрăмах шăрăх кунсенче шывра путса вилекенсен шучĕ ÿсет. Хальхи вăхăт тĕлне пирĕн республикăра 11 çын ытла путса вилнĕ, вĕсем хушшинче – 2 ача.

Çулсеренех специалистсем хăрушсăрлăх правилисене асăрхаттарсах тăраççĕ. Анчах та çынсенчен нумайăшĕ вĕсем çинчен манса каять, вĕсене инкек пырса тивмессе шанать.

**– Елена Михайловна, ытларах мĕнле сăлтавсем инкек патне илсе çитереççĕ?**

– Çынсем путса вилнин сăлтавĕсене тишкернĕ май, ытларах чухне нумайăшĕ ятарлă мар вырăнта шыва кĕни, шывра ишме пĕлменни, çын хăйĕн вăй-халне тĕрĕс хакламанни инкек патне илсе çитернине тупса палăртнă. Тата уйрăмах çакна палăртса хăвармалла, аслисем ытларах ÿсĕр пулнипе шывра путаççĕ. Путса вилекенсем хушшинче нумайăшĕ арçынсем.

Ачасем вара аслисем çителĕклĕ асăрхаса тăман пирки инкеке лекеççĕ.

**– Çынсем нумайăшĕ ишме пĕлетпĕр тесе çырантан инçе ишсе каяççĕ. Путса вилекенсем хушшинче ишме пĕлекенсем пур-и?**

– Шел пулин те, ишме пĕлекенсем хушшинче те инкеке çакланакансем чылай. Хăшĕ-пĕри ыттисенчен хăвăртрах тата инçерех ишме пултарнине ĕнентерес тĕллевпе аякка ишсе каять, тăнрах чăмать. Кун пек хăтланусемпе вĕсем хăйсен умĕнче те, юлташĕсемшĕн те хăрушлăх кăларса тăратаççĕ.

Çавăнпа та пурин те шыв çинче хăрушсăрлăх правилисене пăхăнмалла, тимлĕхе çухатма юрамасть.

**– Елена Михайловна, шыва кĕмелли йĕркене тепĕр хутчен пăхса тухни те вырăнлă пулĕ, хăрушсăрлăх правилисене асăнса хăварăр-ха.**

– Яланах асра тытмалла, пĕлнĕ çĕрте, ятарласа уйăрнă вырăнта çеç шыва кĕмелле. Лайăх пĕлмен тата шыва кĕме юраман вырăнсенче шыв айĕнче тункатасем, туратсем, шĕвĕр чулсем, çĕмрĕк кĕленчесем пулма пултараççĕ, вĕсем çине тăрăнни – пурнăçшăн питĕ хăрушă.

Пĕччен шыва кĕмелле мар тата инçете те ишсе каймалла мар. Инкек сиксе тухсан, юнашар пулăшу паракан никам та пулмĕ. Чикĕ палăртса карнă паллăсем урлă та ишсе каçма юрамасть.

Ăшă та çилсĕр, тÿлек çанталăкра ирхи 8 сехетре 10 сехетчен, каçхине 5-пе 7 сехетчен кăна шыва кĕме тăрăшмалла.

Салтăннă хыççăнах чупса пырса шыва чăммалла мар. Малтан шыва майĕпен кĕрсе тăрса, кĕлеткене шыва пĕчĕккĕн хăнăхтармалла. Çапла организм сивĕ шыва ерипен хăнăхса пырать, шăнăр туртас инкек те сахалланать.

Шывра алхасмалла мар. Пĕрне-пĕри ураран туртса сĕтĕрни, утланса ларни, çурăмран, хулпуççирен шыва тĕртни час-часах инкек патне илсе пырать. Кун пек чухне ăнсăртран шыв çыннăн тип пырне кайма пултарать. Çын вара сывлайми пулса, тăн çухатса çыран хĕрринчех путса вилме пултарать.

Шывра 20 – 25 минутран ытла пулмалла мар. Нумай хушă шывра пулсан, çын шăнса каять. Шăннине пула шăнăр туртса лартас, чирлес хăрушлăх тухса тăрать.

Тата çакна та астумалла, ĕçлесе тарланă хыççăн та тÿрех шыва кĕме юрамасть. Малтан кăштах канмалла, тарланине ирттерсе ямалла. Ÿсĕрле шыва пачах та кĕмелле мар.

**– Ачасемпе инкек сиксе ан тухтăр тесен, ашшĕ-амăшне мĕнлерех сĕнÿсем паратăр?**

– Вăрăм каникул кунĕсем пуçланчĕç. Радио-телевидени, хаçат-журнал урлă специалистсем ача инкеке лекнĕ тĕслĕхсем пирки час-часах каласа асăрхаттараççĕ, аслисене тимлĕрех пулма ыйтаççĕ пулин те, пĕр çул та инкексĕр иртмест. Çÿлерех асăнтăмăр ĕнтĕ, кăçал та ачасем путса пурнăçран уйрăлнă тĕслехсем пур.

Яланах асра тытмалла, ачасен пурнăçĕшĕн аслисем яваплă. Чи малтанах вĕсене кÿлĕсемпе юхан шывсем çывăхĕнче хăйсене епле тытмаллине, пĕлмен вырăнта шыва кĕме юраманнине ăнлантармалла. Ачасене вăхăтра ишме вĕрентмелле. Пĕчĕккисене шыв хĕррине аслисемсĕр хăйсем тĕллĕн çÿреме ирĕк памалла мар. Пĕве, юхан шыв патне ачасемпе пĕрле кайсан та, шыв тарăн мар пулсассăн та, вĕсене сăнасах тăмалла.

**– Елена Михайловна, калаçăва вĕçленĕ май, хаçат вулакансене мĕн сĕнетĕр?**

– Çуллахи кунсем йĕркеллĕ иртчĕр, савăнăçлă асаилÿсем кăна хăварччăр тесен, яланах хăрушсăрлăх правилисене асра тытмалла, вĕсене пăхăнмалла.

# Пирĕн малашлăх. Наци проекчĕсем

## «Демографи»

**«Демографи» наци проекчĕн бюджечĕ пĕтĕмĕшле 3105,2 млрд тенкĕпе танлашать. Çак наци проекчĕн шайĕнче федерацин 5 проекчĕ пурнăçланать.**

**Наци проектне пурнăçлани финанс пулăшăвне парса çемьесен пурнăçне лайăхлатма май памалла – тĕрлĕ тӳлев, пособи, çăмăллатнă ипотека кредичĕ, хĕрарăмсене декрет отпускĕ вăхăтĕнче тӳлевсĕр вĕрентесси, искусствăлла майпа ачаллă пуласси. Çакă ача çуратассин кăтартăвĕ çине, çынсем хăйсен пурнăçĕнчи активлă тапхăра тăсни тата пурнăç тăршшĕ вăрăмланасси çине ырă витĕм кӳмелле. Нацпроект пурнăçланни пенсичченхи ӳсĕмрисене професси пĕлĕвне илме, çавна май ĕç рынокĕнче конкурентлă пулма май памалла. Нацпроект шайĕнчи мероприятисем пурĕ 450 пин çынна ăсталăха ӳстерме тата урăх профессие вĕренме май туса памалла. Нацпроект çынсене сывă пурнăç йĕрки тытса тата тĕрĕс апатланса пурăнма хистемелле, тăтăшах спорт занятийĕсене çӳрекен, хутшăнакан çынсен йышне 55 процент таран ӳстерме пулăшмалла.**

# Аслă ăрури çынсен пурнăçне лайăхлатас тĕллевпе

«Демографи» наци проекчĕ шайĕнче Чăваш Енре регионти 5 проект пурнăçланать. Вĕсем Чăваш Ен Ĕç министерстви, Сывлăх сыхлав министерстви, Спорт министерстви тата Вĕренӳ министерстви пĕрле çыхăнса ĕçленипе пурнăçланаççĕ. Проект пĕтĕмĕшле çемьесене ача çуралнипе çыхăннă пулăшăва парассипе, ачаллă хĕрарăмсене ĕçлеме майсем туса парассипе, виçĕ çул тултарман ачасене шкулчченхи вĕренӳ учрежденийĕсенче вырăнсем туса парассипе, сывă пурнăç йĕркине тытса пымалли условисем йĕркелессипе, çынсен пурнăç тăршшĕне вăрăмлатассипе тата пурнăçа лайăхлатассипе, физкультурăпа тата спортпа туслă пулма майсем туса парассипе çыхăннă.

